## Хĕллехи ир

Пӳрте сивĕ шаккаса
Çывракан çынсе(не) вăрататать,
Малта шурăмпуç çутăлса
Тĕттĕме алăкран хăрататать,
Тĕттĕм ери-ерипе
Куçран йăлтах çухалать,
Йăлтăр-йăлтăр куçĕпе
Пĕтĕм тĕнчене хăй пăхать.
Кӳршĕ ялсен тĕлĕнче
Вăрман ӳссе тăнă пек,
Пӳртри кăмакасен ăшĕнче
Вут йăлкăшать çиçĕм пек.
Тĕтĕм илемлĕ пăтранса
Пĕлĕт çине улăхать,
Хĕвел тĕтĕме шуратса
Ту хыçĕнчен хăпарать.
Юр хĕвелпе çуталса
Ытла çутă курăнать,
Йăлтăр-йăлтăр выляса
Ылтăн тĕслĕ курăнать.
Хĕвел çуталса тухрĕ те,
Тĕттĕм тĕнче çуталчĕ.
Çывракан чунсем тăчĕç те,
Яла сасă сарăлчĕ:
Хăшĕ шыва каяççĕ,
Хăшĕ выльăх шăвараççĕ,
Хăшĕ урампа чупаççĕ —
Йытăсем вĕрсе хăваççĕ.
Тараса кашти сивĕпе
Хаярланса кăшкăрать,
Шыв ăсакан ерипе
Пĕр пусать те пĕр ярать.
Çапла хĕлле ирсайран
Çакăн евĕрлĕ пулать вăл,
Кам та пулсан сăнасан
Ир еплине курать вăл.

*Турхан, Х. Хĕллехи ир…: сăвă / Х. Турхан // Революцичченхи чăваш литератури : текстсем / [А. В. Васильев, Г. Ф. Юмарт пухса хатĕрл.] – Шупашкар, 1984 – Т.1 : XX ĕмĕрччен. – 1984. – С. 256.*